# Районăн харсăр çыннисем



Проект Чăваш Республикин цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин пулăшăвĕпе пурнăçа кĕрсе пырать

**Тăрмăшра Александр Алексеевич Платонов çинчен ял патриочĕ тесе каланине нумай çынран илтме тӳр килчĕ. Вăл паянхи мирлĕ пурнăçшăн вăрçа хутшăннисемпе тыл ĕçченĕсене паттăрлăхĕшĕн ĕмĕр-ĕмĕр тав туса асра тытмалли çинчен самантлăха та манмасть. Кăçал Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче çĕнтернĕренпе 75 çул çитрĕ. Чăнах та, мирлĕ те таса тӳпе парнелекенсене мĕнпе тав тума пултаратпăр-ха эпир? Вĕсен йышĕ те сахалланса пырать-çке. Акă, Тăрмăш ялĕнчен нимĕç фашисчĕсемпе çапăçма вăрçа 606 çын тухса кайнă, 316-шĕ каялла таврăнайман. Лачкасси ялĕпе пĕрле илсен те 2014 çулта юлашки вăрçă участникне чысласа пытарнă.**

## «Чăн-чăн ял патриочĕ»

Район территорийĕнче хаяр вăрçăра пуçĕсене хунă, кайран пурнăçран уйрăлнă салтаксене асăнса 36 палăкпа обелиск лартнă. Аслă Çĕнтерӳ юбилейĕн çулĕнче вĕсене пур çĕрте те юсанă, тирпейленĕ, хушамачĕсене çĕнĕрен çырса «чĕрĕлĕх» кĕртнĕ. «Халăх пуçарăвĕсем çинче никĕсленнĕ общество инфратытăмне аталантарасси çинчен» программăна пурнăçа кĕртсе, «Тăван çĕршывăн 1941-1945 çулсенчи Аслă вăрçăра вилнĕ ентешĕмĕрсем ĕмĕрлĕх асра» обелискпа монумента тĕпрен юсарăмăр»,– пĕлтерчĕ ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Вероника Николаева. Ку çеç те мар-ха, сывлăш десант çарĕсен кунĕнче ВДВн 90 çулхи юбилейне халалласа митинг пулнă, десантник-гвардеецсен ячĕпе халăх укçи-тенкипе туса лартнă палăка уçнă. Ун умĕн пĕр эрне маларах Тинĕс-çар флотĕнче службăра тăнисене, афганецсене, çар ветеранĕсене чысласа палăк уçма сумлă хăнасем Мускавпа Санкт-Петербургранах, Шупашкартан, ытти çĕртен çитнĕ. Тăрмăш хастарĕсемпе активисчĕсем вăрçă паттăрĕсене, мирлĕ пурнăçра тĕрлĕ çар тытăмĕнчи çĕршыв хӳтĕлевçисене халалласа Мухтав монуменчĕ тавра 3 палăк уçнă. Астăвăмпа мухтав ĕçĕ чи малтанах пограничниксен юпине лартнинчен пуçланнине асăнса хăвармалла. Унăн пуçаруçи Александр Платонов пулнă.



♦ А.А.Платонов

Александр Тăрмăш ялĕнче 1966 çулта 4 ачаллă çемьере çуралнă. Моряк пулас ĕмĕт ăна Чулхула облаçĕнчи юханшыв училищине илсе çитернĕ. Йывăр чире пула ашшĕн сывлăхĕ хавшасах пынă, Александрăн вара ачалăх ĕмĕтне «татса», Канашри 16-мĕш номерлĕ профтехучилищĕне куçса электрик-водитель профессине алла илме тивнĕ. Мĕн ачаранах тӳрĕ те çирĕп кăмăлĕпе, йывăрлăхра пуç усманнипе, ыттисене пулăшма тăрăшнипе палăрса тăнă вăл. 1984 çулта кĕрхи призывпа çар ретне тăриччен ашшĕ вилсе кайнă. Яланах тĕслĕх пулнă-çке-ха вăл ывăлĕшĕн, ытти ачисемшĕн те. Ал-ĕç ăсталăхĕ те ашшĕнчен, Алексей Платоновичран, куçнă ахăртнех ăна. Колхозри платниксен бригадинчи ĕçчене ялĕпех хисепленĕ. Амăшĕ Анна Васильевна колхозри ĕçченсене тутлă апат-çимĕçпе сăйланине халĕ те аса илеççĕ. Нумай çул поварта тăрăшнă вăл. Сентябрĕн 18-мĕшĕнче 90 çул тултарчĕ маттур ĕç ветеранĕ.

Çар служби Александр Платоновшăн пиçĕхӳ урокĕ пулнă. Калаçнă хушăра чикĕ сыхлавçи пулнишĕн мăнаçланнине пытармарĕ хăй. Шăпах Афганистан чиккинче тăнă вĕсен çар чаçĕ. Кашни утăмрах вилĕм, чикĕ урлă душмансем каçасран сыхă тăмалла пулнă. Пĕрре кăна мар «вĕри» тытăçусенче хаяр тăшманпа хирĕç тăма тивнĕ. Çамрăк салтаксен кун-çулĕ вăхăтсăр татăлнине чĕре витĕр кăларнă. Александр Алексеевич çакăн çинчен малалла сăмах хускатасшăн пулманнине туйса, калаçăва урăх еннелле пăрма тăрăшрăм.

Канаш хулипе юнашарах вырнаçнăран Тăрмăш çамрăкĕсенчен чылайăшĕ малашлăхне хулапа çыхăнтарать. Салтака кайиччен вакунсем юсакан заводра ĕçленĕскер служба тивĕçне ăнăçлă татнă хыççăн та кунтах таврăнать. Электрик ĕçне шанаççĕ ăна. Тепĕр çулталăкран пурнăç урапи ăна Канашри çупа сыр тăвакан предприятине илсе çитернĕ. Вăл хупăниччenex 17 çул вăй хунă пĕр хăнăхнă ĕçре.

Шăпах çав вăхăтра çуралнă та Александр Алексеевичăн харпăр хăй ĕçне уçас шухăш. Малтанхи утăмсем йывăрлăхсемсĕр мар ĕнтĕ. Çывăх çыннисем, юлташĕсем яланах çумра пулни хавхалантарнă ăна. Канаш хулинче «Сварка металлоконструкций» текен участок паян нумай çыннăн ыйтăвне туллин тивĕçтерет. Складăн пĕр енче – хатĕр продукцисем, тепĕр енче сварка тăвакан цех вырнаçнă. Маларах цехра 10 çын таран та ĕçленĕ пулсан, коронавирус пандемийĕ вăхăтĕнче штата чакарма лекнĕ. Чăнах та, туса кăларакан продукцине ырлаççĕ туянакансем. «Мунча валли тимĕр кăмакана районтан чылайăшĕ кунта туянать. Хурланине илтмен-ха»,– тет кăмăллăн çеç А.Платонов предприниматель.

Пахалăхлă таварпа кăна тивĕçтернине палăртрĕç туянма пынă çынсем те. Мунча кăмакисемсĕр пуçне тимĕр картасем, хапхасем, саккаспа ытти кирлĕ хатĕр-хĕтĕр те янтăлаççĕ.

Платоновсен хулара хăтлă хваттер пур пулин те, вăхăчĕ ытларах Тăрмăшри ашшĕ-амăшĕн килĕнче иртет. Ăна тĕпренех çĕнетнĕ ĕнтĕ. Питĕ илемлĕ кунта. Кашни кĕтесрех асамлăха туятăн. «Илсессĕн, туристсемшĕн те илĕртӳллĕ пулассӑн туйăнать, канма хăтлă, курмалли темĕн те пур»,– тетĕп. Хăй те, мăшăрĕпе ачисем те, ватă амăшĕ те чечексене юратнине туятăн. Кил паçминчи пĕчĕк кӳлĕ – хăй пĕр килĕнӳ. «Пулăсем те ятăмăр-ха унта»,–пĕлтерчĕ Александр Алексеевич. Мăшăрĕ кӳршĕллĕ Канаш районĕнчи Микушка ялĕнчен, Любовь Владимировнапа икĕ ача ӳстернĕ. Пĕр хĕрĕ кооператив институчĕ пĕтернĕ, икĕ ача амăшĕ.

Вăхăтне ялта ирттернĕрен, ял хăтлăхне лайăхлатассипе чылай ырă ĕç тунă А.Платонов, тăвать те. Асăну монуменчĕ умĕнче иртекен пĕр мероприятирен те юлмасть вăл, палăксен таврашне тирпейлесех тăрать. «Хăвăрăн пурнăçа шеллемесĕр хăрушă тăшмана çапса аркатрăр, çĕршыв ирĕклĕхне сыхласа хăвартăр. Тавах сире çĕнтерӳшĕн, паянхи мирлĕ пурнăçшăн, пуçăма таятăп сирĕн умăрта»,– чун-чĕринчен çак сăмахсем тухаççĕ палăк умĕнче тăнă чухне. Паттăр ентешĕсене, халĕ сыхлăх хуралĕнче тăракан, «вĕри точкăсенче» мирлĕ пурнăçшăн кун-çулне панă салтаксене çамрăксен пĕлмелле, нихăçан та манмалла мар тесе шутлать, çамрăксене патриотла воспитани парас тĕлĕшпе нумай вăй хурать.

«Александр Алексеевич, ялта сирĕн пирки ял патриочĕ тенинчен нимĕн тĕлĕнмелли те çук»,–тетĕп.

Чăннипех патриотизм туйăмĕ вăйлă унра, чунĕ уçă, ăшă кăмăлĕпе те туртать хăй патне çынсене. Хĕсметрен таврăнсан темĕн лăпкăн пурăнма паман ăна. Вăл пĕрле службăра тăнă юлташĕсемпе çыхăнăва татман. Кашни пограничник куннех савăнăçлă лару-тăрура паллă тунине аса илет. Çулленех çав кун, майăн 28-мĕшĕнче, палăксем умне чечексем хураççĕ вĕсем. Кунĕпех патриотла юрăсем янăраççĕ. Çамрăксем те пухăнаççĕ ĕнерхи салтаксем тавра. Служба пурнăçĕпе интересленеççĕ. Канашпа унти районти ялсене те çитет митингсене Тăрмăшри А.Платонов.

Хăй каласа панă тăрăх, Канаш районĕнчи Анат Сурăм ялĕнче службӑри тусĕ пограничник юпи лартни питĕ хавхалантарнă ăна. «Пирĕн Тăрмăш – районти пысăк ялсенчен пĕри. Мухтав монуменчĕ çывăхне лартасчĕ ăна хамăр патăрта та»,– шухăшне пĕлтернĕ юлташĕсене. Ку ыйтупа Канаш хулин, Канаш тата Тăвай районĕсен çар комиссариатне çитнĕ. «Питĕ аван шухăш, паянхи çамрăксем çине те ырă витĕм кӳмелле, çакăн пек тĕслĕхсем яшсен çар ретне тăрас туйăмне çирĕплетме пулăшаççĕ, патриотизм туйăмне вăйлатаççĕ»,– тенĕ Юрий Витальевич Барышов çар комиссарĕ.

Çапла хăйĕн укçи-тенкипе, пĕр шухăшлисем пулăшнипе 2017 çулта пограничниксене халалланă юпа вырнаçтарнă ялти палăк çумне. Тăрмăшра унпа пĕр шухăшлă, ăна пулăшас текен çамрăксем нумайланса пынине палăртма кăмăллă, ял тăрăхĕн администрацийĕпе те килĕштерсе ĕçлеççĕ ял патриочĕсем. Александр Алексеевич халĕ çĕршыв чиккисене хураллӑкан ентешсен ячĕпе лартнă пограничник юпине астăвăм палăкĕ шайне çитересшĕн. Хăйпе пĕр шухăшлисенчен вăл чи малтанах Вячеслав Сидорова, Евгений Павлова, Михаил Матросова тата ыттисене асăнчĕ. «Турмышское боевое братство» пĕрлĕхĕн ĕçĕ-хĕлне ырă енчен палăртрĕ. «Хамăр ĕçпе çамрăксен чунĕнче çĕршывшăн мăнаçланас туртăма вăратмалла»,– теççĕ кунти салтак-ветерансем. Сăмаха ĕçпе çирĕплетсе пачĕç те ĕнтĕ вĕсем кăçал. Ял çыннисем те, ял тăрăхĕн администрацийĕ ку тĕлĕшпе пĕр шухăшлă. Ялта палăксем уçни чăнчăн уява куçнăччĕ ун чухне ял халăхĕшĕн те, хăнасемшĕн те.

Кăçал Тинĕс-Çар флотĕнче, десант çарĕнче, «вĕри точкăсенче» çар тивĕçне пурнăçланисене, пуç хунисене асра тытса ялти Мухтав Монуменчĕ çывăхĕнче виçĕ палăк лартни çинчен çӳлерех асăннăччĕ-ха ĕнтĕ. «Чыс та мухтав сире!» – тесе калас килет Тăрмăшри ырă пуçаруçăсемпе пархатарлă ĕç тăвакансене.

Çак сăваплă палăксем умĕнчен çын ан татăлтăр. Митингсем, паттăрлăх урокĕсем иртчĕр. Курчăр пирĕн аттесемпе асаттесем вĕсен ячĕпе чысласа лартнă палăксем умне пырса пуç тайнине. Сентябрĕн 2-мĕшĕнче, II-мĕш тĕнче вăрçи пĕтнĕ кун, кадетсем пуçтарăннă кунта. Митинг иртнĕ. Тăрмăшри вăтам шкулти музей заведующийĕ В.Сидоров, ыттисем сăмах тухса каланă.

Раççей Президенчĕ Владимир Путин пĕлӳ кунĕнче вĕренекенсен умĕнче Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин историне ют çĕршывсем суя çулпа ярасшăн пулни, паллă çар çыннисен палăкĕсене çĕмĕрни, вуçех те илсе пăрахни çинчен те витĕрӳллĕ сăмах пуçарчĕ. Истори страницисене улăштарса çырма памалла мар. «Вилĕмсĕр полк» ретĕнче паян ытларах çамрăксене куратпăр. Çакă хамăр çĕршывшăн мăнаçлăх туйăмне вăйлатать. Пирĕн паянхи тивĕç – паттăрлăхпа кĕрешӳре тăшмана парăнтарнă совет çыннисен çинчен калакан чăнлăха тивĕçлĕн сыхласси»,–тет Александр Платонов.

«Яла тирпей-илем кĕртме çынсене ытларах явăçтармалла»,– шухăшне малалла тăсрĕ ял хастарĕ. Ял умĕ текен вырăна хăтлăх кĕртсе чи илемлĕ вырăн тума пуçăннă ĕнтĕ Александр Алексеевич. Ĕлĕкрех çав вырăнтан çĕнтерӳпе каялла таврăнма сунса вăрçа ăсатнă, каярахпа – çар службине. Хырсем лартса аллея та хывнă темиçе çул каялла. Йывăçĕсем çӳлеллех кармашаççĕ, 4-5 метр ӳснĕ те ĕнтĕ. Сăмахăма малашлăхри ĕçсем çине куçарсан, ялта часовня тата ытти те тăвас шухăш канăç паманнине пĕлтерчĕ: «Сывлăхĕ пулсан, нухрачĕ пулсан халăх питĕ ыйтнине пĕрлехи вăйпа пурнăçлама пултаратпăрах».

**Р.ШУМОВА.**

## ШУХĂШ

**В.Г.СИДОРОВ**, Тăрмăш ялĕ:

Чăнах та, Александр Платонов чăн-чăн тăван ен патриочĕ. Ял пурнăçне лайăхлатма хутшăнса нумай спонсорла пулăшу панă. 2012 çултах, ялта хоккей площадки тусан, хăй вăйĕпе унти юра тасатса тăмалли техника илсе пачĕ. Çарта пограничник пулнă май, 2017 çулта Тăрмăш ялĕн фронтовикĕсене асăнса лартнă палăк çумне пограничниксен юпине вырнаçтарчĕ. Ăна уçма районтан килнĕ нумай пограничник-ветеран тав турĕ. Çавăн чухне эпĕ унпа çывăхрах паллашса, Тăрмăш ялĕнче «Боевое братство» ветерансен пĕрлешĕвĕ йĕркелеме шут тытрăмăр. Ăна ертсе пыракан канаш питех те активлă ĕçлет. Халăхран ирĕклĕ майпа укçа пуçтарса палăк çумне тата виçĕ стела лартса хучĕ. Аслă Çĕнтерӳ 75 çул тултарнă çул ял халăхне пысăк парне пулчĕ ку. Çак пулăм та А.Платонов пуçарнипе пурнăçланчĕ.